Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май

# Асран тухмаççĕ вăрçă çулĕсем

*Апрелĕн 16-мĕшĕнче районти историпе краеведени музейĕнче Муркаш ял тăрăхĕнчи Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсемпе тата тыл ĕçченĕсемпе тĕл пулу иртнĕ. Малтанах «Çавра сĕтел» хушшинче калаçу иртнĕ. Унта Муркаш шкулĕнче вĕренекенсем те хутшăннă. Ветерансем умĕнче ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н.И. Никитин тухса калаçнă.*

*Хыççăн «Çавра сĕтеле» республика хăнисем те хутшăннă. Кусем вĕсем Чăваш Республикинчи «Чăваш Енри çамрăксен «Салам» культура центрĕ» обществăлла организацие йĕркелекенсем Светлана Яковлева тата Алексей Шадриков.*

*Сăн ӳкерчĕкре: ял тăрăхĕнчи ветерансем Н.Г. Алексеев, А.Г. Казаков тата А.К. Капитонов тĕл пулу вăхăтĕнче.*



Пирĕн интервью

# Камсем тивĕçеççĕ-ха хваттере?

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Çавăн пирки те чарăнса тăмалла. Саккунра ветерансене çурт-йĕрпе тивĕçтересси, ăна туянма майсем туса парасси пирки каланă. Çавна валли кашни ветеран пуçне 910 пин те 800 тенкĕ уйăрма палăртнă. Анчах та хальхи вăхăтра вăрçă ветеранĕсен çурт-йĕрне юсамалли тĕслĕхсем те сахал мар. Вĕсене урăх çурт-йĕрпе тивĕçтермесĕрех юсав ĕçĕсене туса иртерсе пурăнмалли условисене лайăхлатма май пур. Çавăнпа та эпир кун пеккисенчен те документсене йышăнатпăр. Хальлĕхе вара çӳлте асăннă указра çурт-йĕре юсама укçа-тенкĕ уйăрасси пирки каламан пулсан та, улшăну пулма кирлĕ.

Учета тăрассин йĕрки çапла. Ветерансене çемьери кашни çын пуçне пурăнмалли лаптăк виçи 12 тăваткал метртан сахал пулсан, черете тăратаççĕ. Вĕсен кун пирки вырăнти ял тăрăхĕн администрацине пырса заявлени çырса памалла. Документсем кайран район администрацине килеççĕ. Унтан вара пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма укçатенкĕ уйăрасси пирки республика Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерстви йышăну тăвать.

Асăннă суммăна алăран памаççĕ. Вăл банкри ятарлă счет çинче пулать. Ăна хваттер е çурт туяннă чухне банк урлă куçарса параççĕ. Хваттер е çурт çĕнĕ е унччен унта çынсем пурăнни те пулма пултарать.

Юлашки вăхăтра эпир ял тăрăхĕсенче пулса куртăмăр. Çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас тĕллевпе документсем хатĕрлес шухăшлисем татах 50 çынна яхăн. Асăннă указпа килĕшӳллĕн пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас, юсав ĕçĕсем туса иртерес шухăшлисене документсене майăн 1-мĕшĕччен хатĕрлесе пама сĕннĕ пулăттăм. Унсăрăн кая юлма та пулать.

Аслă Отечественнăй вăрçă участникĕсене пурăнмалли çурт-йĕр кирлисен списокне кĕртессине Раççей Федерацийĕн Пурăнмалли çурт-йĕр кодексне тата Чăваш Республикин «Пурăнмалли çурт-йĕр хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен» Саккунне çирĕп пăхăнса туса пыраççĕ. 2009 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă 327 № «Ветерансем çинчен» Федераллă саккуна улшăнусем кĕртесси çинчен» Федераллă саккун положенийĕсемпе килĕшӳллĕн енчен те Аслă Отечественнăй вăрçă инвалидĕсемпе участникĕсен тăлăх арăмĕсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатмалла пулсан, вĕсене çурт-йĕрпе федераллă бюджет шучĕпе хăçан учета тăнине пăхмасăрах тивĕçтерĕç. Çакă пĕтĕмпех «Ветерансем çинчен» Федераллă саккунăн 21-мĕш статйипе килĕшӳллĕн пулса пымалла.

Тепĕр чухне çакăн пек тĕслĕхсене те курма пулать. Уйрăм тĕслĕхсенче ветерансенчен хăшĕсем хăйсен пурăнмалли условийĕсене ятарласа япăхлатса кăтартма хăтланаççĕ. Калăпăр, пурăнма кирлĕ лаптăк нормине чакарас тесе унта пурăнман тăван-пĕлĕшне пропискӑна тăратаççĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕн 2008 çулхи майăн 7-мĕшĕнче йышăннă «1941–1945 çулсенчи Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене çурт-йĕрпе тивĕçтересси çинчен» 714 № Указĕпе килĕшӳллĕн çурт-йĕр илес тесе хăйсен çурт-йĕр условийĕсене ятарласа япăхлатса кăтартакансем пирки çавна каламалла. Раççей Федерацийĕн Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕн 53-мĕш статйипе килĕшӳллĕн енчен те граждансем хăйсен пурăнмалли условийĕсене япăхрах туса кăтартас тĕллевпе уйрăм ĕçсем туса иртернĕ пулсан, вĕсене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма тивĕçлисен учетне унтанпа 5 çул иртмесĕр илмеççĕ.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. Хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма черете тăнă ветерансенчен 3-шĕ свидетельствăсем илнĕ ĕнтĕ. Кусем вĕсем иртнĕ çул черете тăнисем. Çывăх вăхăтрах вĕсем укçа куçнă май хваттерсем илме хатĕрленеççĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç

**Йăлана кĕнĕ йĕркепе, районта апрелĕн 21-мĕшĕнче черетлĕ информаци кунĕ иртрĕ. Унăн теми – 2010 çулхи апрелĕн 29-мĕшĕнче Чăваш автономине туса хунăранпа 90 çул çитнĕ май Чăваш Республикин патшалăх символĕсен кунне халалласа хатĕрленсе иртерекен мероприятисем, экологи субботникĕсем, Йывăç кунĕн çуркуннехи тапхăрне, ялсенче тирпей-илем ĕçĕсене хатĕрленсе туса иртересси.**

Район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсемпе килсе çитнĕ хăнасем ушкăнсемпе районти предприятисемпе организацисенче пулса курчĕç, вĕсенче ĕçлекенсемпе тĕл пулчĕç, çынсене хумхантаракан ыйтусем çине хуравларĕç.

РФ Юстици министерствин Чăваш Республикинчи лабораторипе суд экспертизин патшалăх учрежденийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов, РФ социаллă страховани фончĕн Чăваш Республики тăрăх регион уйрăмĕн управляющийĕн çумĕ Т.Б. Алексеева, район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова малтанах Муркашри кирпĕч заводне çитрĕç. Кунти ĕçсемпе завод директорĕ В.П. Тукмаков паллаштарчĕ.

Экономика кризисĕ витĕм кӳмесĕр тăма пултараймасть. Кунта та çавна пула илсе каяйман продукци йышланса кайнă. Унччен çулсенче 13 миллион тенкĕлĕх продукци реализациленĕ пулсан, халĕ ку хисеп 6 миллион ытларах тенкĕпе танлашать.

Пăчкă кĕрпине ытларах Чул хуларан, Çармăс Республикинчен турттараççĕ. Хатĕрленĕ тăм запасĕ 1 çуллăха çитет. Технологипе килĕшӳллĕн халĕ унăн йӳçмелле. Çакна çут çанталăк хăех пурнăçлать. Хăйăрне те, тăмне те продукци хатĕрлеме лицензипе килĕшӳллĕн турттараççĕ, уншăн налукне те тӳлеççĕ.

Паянхи куна производствăна чарнă. Мĕншĕн тесен майăн 10-мĕшĕччен йывăр тиевлĕ автотранспорта çӳретессипе чару пур. Территорире вара 700 пин тенкĕлĕх реализацилемелли продукци пур. Çавна май ĕçлекенсенчен ытларахăшне районти ĕçпе тивĕçтерекен центр урлă заводăн территорине тирпей-илем кĕртес, тасатас ĕçсене явăçтараççĕ.

Заводра производство технологийĕсене автоматизацилессипе çине тăрса ĕçлени куçкĕрет. Сăмахран, унччен формовкăра алă вăйĕпе ĕçлеме 20 çын кирлĕ пулнă пулсан, халĕ кунта 9 çын вăй хурать. Çитменнине çакă йывăр тиев йăтассипе пачах та çыхăнман. Продукци вара унччен хинчен сахал тухмасть.

Çакна та палăртса хăвармалла. Унччен вĕри цехран ăшă сывлăша кайнă темелле. Халĕ вара ăна цеха таврăнмалла майлаштарнă. Çакă экономи тĕлĕшĕпе те, çынсене ĕçлеме майсем туса парассипе те курăмлă.

Ĕç укçи пирки калас пулсан, ĕçлекенсен халĕ вăл вăтамран 8 пин тенкĕпе танлашать. Кризисчен вара вăл 15 пин тенкĕрен тытăнса ытларах та пулнă.

Апла пулин те завод малашлăха пăхмасть темелле мар. Майсем тупса иртнĕ çулсенче кунта икĕ бульдозер, КамАЗ, икĕ çăмăл автомашина туянма майсем çитернĕ.

Паянхи куна ĕçлекенсен хисепĕ 117 çын. Унччен вара вĕсем 183 çын пулнă. Унччен хи 3 бригада вырăнне бригадăсене 2 хăварнă. Çапах та туса кăларакан продукци калăпăшне чакарман.

Хыççăн информаци ушкăнĕ «Чувашсетьгаз» уçă акционер обществин «Моргаушимежрайгаз» филиалĕнче пулчĕ. Кунти ĕç-хĕл пирки предприяти директорĕ Решит Халиуллович Чебенов каласа пачĕ.

Предприяти япăх мар ĕçлесе пырать. Ĕçлекенсен уйăхри вăтам ĕç укçи 10 пин тенкĕ ытла. Хальхи кризис вăхăтĕнче ку япăх темелле мар. Территорие тирпей-илем кĕртессине, çӳп-çап пуçтарассине аван йĕркеленĕ. Информаци ушкăнĕ кунта пулнипе кăмăллă юлчĕ.

Информаци кунĕн итогĕсене пĕтĕмлетсе çавна каламалла. Кулленхи ыйтусене татса парассине кризис е ытти çине йăвантарма кирлĕ мар. Пурте пĕр условисенче пурăнатпăр. Умри йывăрлăхсене епле татса парасси те ытларах хамăртан килет. Апла пулсан малашлăха пăхса тĕллевлĕ ĕçлес пулать.

**В. ЛЕОНИДОВ.**

Пирĕн паллă ентешсем

# Мухтавлă писатель-патриот

Василий Тимофеевич Ржанов 1915 çулхи апрелĕн 16-мĕшĕнче Козьмодемьянск уесĕн (халĕ Муркаш районĕ) Шашкар ял тăрăхĕнчи Вăрманкасси ялĕнче çуралнă. Хресчен çамрăкĕсен Каршлăхри шкулне, Ленинградри А.Н. Островский ячĕпе хисепленекен театр институтне, А.М. Горький ячĕпе хисепленекен литература институтне вĕренсе пĕтернĕ. Аслă Отечественнăй вăрçăна хутшăннă. Çапăçусенче хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн ăна Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, Аслă Отечественнăй вăрçăн 1-мĕш степень орденĕпе (икĕ хутчен), Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе, медальсемпе наградăланă. Йывăр аманнă. Вăл драматург, прозаик, публицист пулнипе паллă. 1952 çултанпа СССР Писательсен союзĕн членĕ пулнă. Ăна ЧАССР Аслă Канашĕн Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Кунпа пĕрлех вăл – Чăваш АССР-ĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ. Вăлах «Сĕм вăрмантан» («Из дремучего леса», 1958), «Пĕр пайлă пьесăсем» («Одноактные пьесы», 1962), «Тĕнче çаврăнать» («Разбуженный мир», 1968), «Своими глазами» (1970, 1985) тата ытти кĕнекесен авторĕ пулса тăрать.

Паллă чăваш драматургĕ, прозаикĕ, публицисчĕ В. Ржанов çуралнăранпа 95 çул çитнине халалласа Ильинка шкулĕнче «Мухтавлă ентешĕмĕр – писатель-патриот» ятпа литература каçĕ иртнĕ.

Мероприятие район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов уçнă. Литература каçĕнче Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В. Перцев, Ильинка шкулĕн директорĕ В.Ф. Ильина, Ильинка шкулĕн учителĕ, таврапĕлӳçĕ И.А. Каргин, чăваш чĕлхипе литературин учителĕ Л.В. Семенова, В.Т. Ржановăн тăванĕсемпе çывăх çыннисем сăмах тухса каланă.

Пĕтĕм каçĕпех «Пăшалпа та, перопа та» электронлă презентаципе, «Муркаш районĕнчи писательсемпе таврапĕлӳçĕсем» библиографи кăтартăвĕпе паллашма май пулнă. Вĕсене Муркаш районĕнчи ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотека хатĕрленĕ. Ильинка шкулĕнче вĕренекенсем В. Ржановăн «Имена героев его книг бессмертны» кĕнекинчи уйрăм пайсене вуласа панă. Вăрманкассинчи Культура çуртĕнчи драма коллективĕ спектакль кăтартнă. Ку вăл – В. Ржановăн «Автан ахаль авăтмасть» сатира комедийĕн пайĕ.

Хыççăн вара ачасен Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалланă ӳкерчĕксен конкурсĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ. Юлашкинчен Тренккăри, Апчарти тата Вăрманкассинчи Культура çурчĕсенчи художество пултарулăх коллективĕсем концерт программипе савăнтарнă.

**Э. ДИМИТРИЕВА, Муркашри ял тăрăхĕсем хушшинчи тĕп библиотекăн инноваципе методика секторĕн заведующийĕ.**

Аслă Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнĕ май

# Виç кĕтеслĕ çырусем

Виç кĕтеслĕ, хутлатнă, саралнă хутсем. Çаксем ĕнтĕ вĕсем – вăрçă хирĕнчен салтак янă çырусем. Вĕсенче – вăрçăн малтанхи çулĕнчи пăшăрхану, куляну, хуйхă, вăрçă хирĕнчи çапăçу кĕрлевĕ, çапах та салтаксем, офицерсем, медицина сестрисем çĕнтерĕве ĕненни.

Март уйăхĕнче Йӳçкасси ял библиотекинче Панклири краеведени музейĕн директорĕ Н.Н. Яковлева «Виç кĕтеслĕ çырусем» ятпа вулав ирттерчĕ. Вулава совет халăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунăранпа 65 çул çитнине халалланă.

Йӳçкасси шкулĕн ачисем музейра упранакан 1940–1943 çулсенче вăрçă хирĕнчен янă çырусене вуларĕç. 65–70 çул каялла çырнăскерсем, салтаксен паттăрлăхне уççăн кăтартса параççĕ.

Семен Сергеевăн фашистсен тыткăнĕнчен янă çырăвне Ростислав Семенов вуларĕ. Паттăр танкиста фашистсем тискеррĕн вĕлернĕ. Çырăвне вара тĕлĕнмелле майпа вилĕмрен юлнă юлташĕ А. Васильев ярса пама пултарнă. Допрос пынă вăхăтра 5 совет самолечĕ вĕçсе иртни нимĕçсене сапалантарса янă. Арпашупа усă курса тарнă та ĕнтĕ Андрей Васильев.

Алексейпа Герман Деомидовсен çырăвĕсене С. Шапошниковпа И. Трофимов вуларĕç. «Киле вĕçсе çитсе тăрасчĕ, кил-йышпа пĕрле ларса тăраниччен паранкăпа çăкăр çиесчĕ»,– ĕмĕтленет Герман. Вăрăмах мар унăн çырăвĕ. «Киле пырсан калаçăпăр ун чухне»,– тет вăл. Çук çав, пӳрмен Германпа Алексее киле таврăнма, пĕчĕк йăмăкĕсемпе шăллĕ епле çитĕннине курма.

Георгий Егоровăн çырăвне те хумханмасăр вулама çук. Якур пиччĕшĕ Çемен, атакăна ыткăннăскер, тăшман снарячĕн ванчăкĕпе пуçĕ татăлсан та тепĕр вунă утăм малалла чупнă иккен.

Епле хĕпĕртенĕ пулĕ тата салтак килтен хыпар çитсен. Ялтан янă çырăва вара Настя Васильева вуларĕ. Ку çырусем – сурана сиплекенсем, вăй-хăват хушакансем. Çавăнпа вăрçăри почтальонсем фашист пульли лекесрен хăрамасăрах, снарядсем çурăлнине пăхмасăрах фронтăн малти линийĕ таранах çырусене вăхăтра çитерсе пама тăрăшнă. Вĕсем туйнă, пĕлнĕ салтаксем хăйсене еплерех кĕтнине. Çавăн пек почтальонсенчен пĕри вăл – Актай ялĕнчи Н.А. Александров. Уява чĕннĕччĕ ăна. Шел, операцие пула пыраймарĕ.

А. Димитриева библиотекарь кĕнеке выставки йĕркеленĕ. Ачасем унпа та паллашрĕç. Кĕнекесем хушшинче «Основы поисковой работы» кĕнеке те пурччĕ. Хыпарсăр çухалнисем хушшинче пирĕн ентешсем те чылайăн. Вĕсем ăçта çапăçнине, мĕнле пуç хунине шыраса тупма çак кĕнеке пулăшĕ.

**Настя ЯКОВЛЕВА.**